Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политики министерстви
ЧР ВМХПВ «Чăваш  Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ

Этнокультура вĕренĕвĕн кафедри

# 2021 çулта 9-мĕш класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе тĕрĕслев ĕçĕ çырма хатĕрлесси

Чăваш чĕлхи вĕрентекенсем валли хатĕрленĕ  меслетлĕх кăтартăвĕсем

Шупашкар – 2021

Меслетлĕх кăтартăвĕсене тĕп шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем валли хатĕрленĕ. Ĕçĕн тĕп тĕллевĕ – шкул ачисене чăваш чĕлхипе тĕрĕслев ĕçĕ çырма хатĕрлеме пулăшасси. Кăтартусенче тĕрĕслев ĕçĕн тĕслĕхне тишкернĕ, ĕçсене мĕнле тумаллине ăнлантарнă, усă курмалли литература сĕннĕ.

Меслетлĕх кăтартăвĕсене çырнă чух республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕслĕх вариантне, кодификаторне, спецификацине, тĕрĕслевпе хаклав материалĕсене кашни çул валли хатĕрлесе, республикăн пĕрлехи экзаменне ирттерсе пухнă опытпа усă курнă.

Хатĕрлекенĕ – филологи наукисен кандидачĕ, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн этнокультура вĕренĕвĕ кафедрин доценчĕ А.С. Егорова.

**Содержани**

Ум сăмах………………………………………………………………….. 4

Тĕрĕслев ĕçĕ çырма хатĕрлесси…………………………………………. 11

Усă курма сĕннĕ литература…………………………………………….. 18

Интернет ресурссем………………………………………………………. 12

Хушса пани. Чăваш чĕлхипе çырнă тĕрĕслев ĕçĕсене хакласси…….. 13

## Ум сăмах

2020-2021 вĕренӳ çулĕнче 9-мĕш класс пĕтерекен ачасен республикăн пĕрлехи экзаменне пăрахăçланă, ун вырăнне вĕсем тĕрĕслев ĕçĕ çыраççĕ. Тĕрĕслев ĕçĕ тĕп шкул пĕтерекен ачан чăваш чĕлхипе илнĕ пĕлĕвне пĕтĕмĕшле хаклама май парать.

Методика кăтартăвĕсен тĕп тĕллевĕ – шкул ачисене чăваш чĕлхипе тĕрĕслев ĕçне хатĕрлеме пулăшасси.

Тĕрĕслев ĕçĕн ыйтăвĕсене чăваш чĕлхипе 2021 çулта тытмалли республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен спецификацийĕ çине таянса хатĕрлемелле.

Тĕрĕслевпе хаклав материалĕ 8 ĕçе пĕрлештерекен 2 пайран тăрать.

1-мĕш пайра – вуланă текстăн тĕп шухăшне туллин çырса памалла.

2-мĕш пай кĕскен хуравламалли 7 ĕçрен (2-8) тăрать.

Кĕскен хуравламалли çакăн йышши ĕçсене палăртмалла:

– сăмах (сăмахсем) çырса хуравламаллисем;

– цифра (цифрăсем) çырса хуравламаллисем.

Тест ыйтăвĕсем сăмах, предложени, текст тишкерессипе çыхăннă. Кашни ыйту хыççăн 5-шер вариант хурав панă. Вĕсенчен тĕрĕсси пĕрре е темиçе пулма пултарать Тĕрĕс мар хурав çырсан ăна туртмалла та унпа юнашар çĕннине çырмалла.

1-8-мĕш ĕçсен хуравĕсене текстра ятарласа палăртса хăварнă вырăна çырмалла.

**Тĕрĕслев ĕçĕн 1-мĕш пайĕнче** – вуланă текстăн тĕп шухăшне туллин çырса памалла. Текстăн тĕп шухăшне (идейине) унăн темипе пăтраштармалла мар. Тема – сăнлавра, калавра тата ăславра яплана, пулăма, пулса иртнĕ ĕçе сăнласа пани. Идея – текстăн тĕп шухăшĕ, автор мĕн каласшăн пулни, унăн шухăшĕ. Чылай чухне автор текстăн тĕп шухăшне унăн юлашки предложенийĕпе çыхăнтарать.

Пĕлетпĕр ĕнтĕ, 2021 çула Чăваш Енре Сăр тата Хусан хӳтĕлев чиккине тăвакансен ĕç паттăрлăхне халалланă. Çакăн çинчен калакан Указа Республика Пуçлăхĕ Олег Николаев 2020 çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче кăларнă. Республика тата çĕршыв историйĕнчи пĕлтерĕшлĕ пулăм кăçал 80 çул тултарать, çавăнпа та тĕрĕслев ĕçĕнче тишкермелли текстăн темипе идейи çак пулăмпа çыхăннă.

**Тĕрĕслев ĕçĕн 2-мĕш пайĕнче** тест ыйтăвĕсене хуравламалла. Ку ĕçĕн тĕллевĕ – вĕренекен вуланă текста ăнланма тата текстран кирлĕ информаци илме пултарнине, чĕлхе пулăмĕсене тишкерсе классификацилеме пĕлнине тĕрĕслесси.

2-мĕш пай кĕскен хуравламалли 7 ĕçрен (2–8-мĕш ĕçсем) тăрать. Кĕскен хуравламалли ĕçсем шутне сăмах (сăмахсем) тата цифра (цифрăсем) çырса хуравламаллисем кĕреççĕ. Тест ыйтăвĕсем сăмах, предложени, текст тишкерессипе çыхăннă. Кашни ыйту хыççăн 5-шер вариант хурав панă. Вĕсенчен тĕрĕсси пĕрре е темиçе пулма пултарать. 2–8-мĕш ыйтусен хуравĕсене текстра ятарласа палăртса хăварнă вырăна çырмалла.

Малалла 2021 çулта çырмалли тĕрĕслев ĕçĕн тĕслĕх вариантĕнче панă кашни ыйтăва уйрăммăн пăхса тухăпăр.

**Тестăн пĕрремĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 2-мĕш ĕç)** текстăн содержанине тишкерессипе çыхăннă. Ачасен текста тимлĕ вуламалла та хурав варианчĕсенчен текст содержанине хирĕçлеменнисене суйласа илмелле. Йăнăшсем ытларах факт тĕлĕшĕнчен (пайăр ятсене, ĕç вăхăчĕпе вырăнне, япала е ĕç шутне т.ыт.те йăнăш палăртни) тӳр килменнипе пулма пултараççĕ.

| |
|---|
| **Тĕслĕх**. Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ? |

1) Укахви шӳт тума юратакан хӗр ачаччӗ.

2) Укахви, Ольга, Хӗветура Етӗрне тăрăхӗнчен окоп чавса таврăннă.

3) Шартлама сивӗре тимӗр кăмака хутакан бараксенче ҫӗр каҫнă.

4) Ҫичӗ уйăх хушшинче хӗрсем тем те тӳснӗ.

5) Вăрҫăрисене те, ялтисене те ҫăмăл мар.

1-мӗш тата 12-мӗш предложенисене вуласа 1-мӗшпе 5-мӗш вариантсем тӗрӗссине куратпăр. Текстра Укахви, Ольга, Хӗветли окоп чавса таврăнни ҫинчен ҫырнă, ҫавăнпа 2-мӗш вариант хуравӗ тӗрӗс мар. 8-мӗшпе 9-мӗш предложенисем 3-мӗшпе 4-мӗш хуравсем тӗрӗс маррине ӗнентереҫҫӗ.

**Тестăн иккӗмӗш ыйтăвӗ (пӗтӗмӗшле 3-мӗш ӗҫ)** текстра илемлӗх мелӗсене тупассипе ҫыхăннă. Экзамен ӗҫӗнче чӗлхене илемлетекен мелсенчен эпитет, танлаштару, метафора, метоними, сăпатлантару пулма пултарать.

**Тӗслӗх.** Танлаштаруллă предложени номерне кăтартăр.

*(1)* Укахви йăрă та чӗрӗ, хаваслă та калаҫма, шӳт тума юратакан хӗр ачаччӗ.

*(2)* Вăрҫă пуҫланнăранпа пачах улшăнчӗ.

*(3)* Кăмăлӗпе пусăрăнчӗ, сăнне-питне ӗшенчӗк сӗм ҫапрӗ, янкăс сасси салху ҫемме куҫрӗ.

*(4)* Мӗн-мӗн курман пулӗ вӗсем темиҫе уйăх хушшинче, мӗн-мӗн тӳсмен?

*(5)* Шартлама сивӗре чул пек шăннă ҫӗре лумсемпе ватса чавнă, сивӗ бараксенче ҫӗр каҫнă.

Танлаштару тесе лайăхах пӗлмен япалана е унăн пӗр-пӗр паллине лайăхрах пӗлекен тепӗр япалапа е унăн паллипе танлаштарса кăтартнине калаҫҫӗ. Танлаштарăвăн грамматика мелӗсем:

1) *пек, евӗр, евӗрлӗ, майлă, йышши, манерлă* т.ыт. сăмахсем (*хурăн пек яштака, хуҫа евӗр тыткала* т.ыт.те);

2) ят сăмахсен туху падежӗнчи формипе танлаштару форминчи паллă ячӗн пӗрлешӗвӗ (*Канашран пысăкрах хула, тилӗрен чеерех ҫын* т. ыт.те).

*Шартлама сивĕре чул пек шăннă çĕре лумсемпе ватса чавнă, сивĕ бараксенче çĕр каçнă* предложенире *чул пек* сăмахсем танлаштару пулаççĕ. Ытти предложенисенче танлаштару çук.

**Тестăн виççĕмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 4-мĕш ĕç)** лексикăпа (антоним е синоним тупассипе) çыхăннă.

***Тĕслĕх.*** *Хаваслă* сăмахăн (1-мĕш предложени) антонимне текстра тупса çырăр.

Синонимсем тесе пĕр ăнлавах пĕлтерекен, анчах тĕрлĕрен илтĕнекен сăмахсене калаççĕ. Антонимсем – хире-хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем. *Хаваслă* сăмахăн антонимĕ – *салху,* вăл 4-мĕш предложенире тĕл пулать.

**Тестăн тăваттăмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 5-мĕш ĕç)** синтаксис тишкерĕвĕ тăвассипе çыхăннă.

Экзамен тытаканăн 5 предложенирен тăракан текста вуласа тухмалла та хуравра предложенисен тĕп членĕсене (грамматика никĕсне) тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартмалла. Предложенисене тишкернĕ чухне çаксене асра тытмалла:

1) предложенин тĕп членĕсене (грамматика никĕсне) палăртма сказуемăйран пуçламалла;

2) сказуемăй чăваш чĕлхинче ытларах чухне предложени вĕçĕнче тăрать;

3) сказуемăй ытларах чухне глаголтан, япала ятĕнчен, паллă ятĕнчен пулать;

4) глаголăн сăпатлă формисем предложенире яланах сказуемăй пулаççĕ;

5) подлежащи хăй пĕлтерĕшлĕ пур пуплев пайĕнчен те пулма пултарать;

6) тĕп падежри 1-мĕшпе 2-мĕш сăпат местоименийĕсем предложенире яланах подлежащи е сказуемăй пулаççĕ.

**Тĕслĕх**. Предложенисен грамматика никĕсне тĕрĕс палăртнă варианта кăтартăр.

1) *Укахви хĕрачаччĕ* (1-мĕш предложени);

2) *вăй улшăнса кайрĕ* (3-мĕш предложени);

3) *кăмăлĕпе пусăрăнчĕ* 4-мĕш предложени);

4) *çакна сисет* (5-мĕш предложени);

5) *мĕн-мĕн тӳсмерĕ* (11-мĕш предложени).

Чи малтанах скобкăра палăртнă предложенисемпе тепĕр хут паллашатпăр, кашни предложенин тĕп членĕсене тупатпăр. Пĕрремĕш предложенири тĕп членсем: *Укахви хĕрачаччĕ.* Виççĕмĕш предложени – пăхăнуллă хутлă, çавăнпа предложени никĕсĕсем иккĕ: *арçын хуçălса ӳкмелли* тата *улшăнса кайрĕ.* Тăваттăмĕш предложени те хутлă, предложени никĕсĕсем виççĕ: *пусăрăнчĕ, сĕм çапрĕ, сасси куçрĕ.* Пиллĕкмĕш предложени никĕсĕ: *Укахви хăй сисет*. Вун пĕрмĕш предложени никĕсĕ: *халăхĕ тӳсмерĕ.*

Предложенисен хамăр палăртнă тĕп членĕсене хуравврисемпе танлаштарса тухатпăр та 1-мĕш хурав тĕрĕссине ăнланатпăр. 2-мĕш хурав тĕрĕс пулма пултараймасть, мĕншĕн тесен *вăй* сăмах *улшăнса кайрĕ* сăмахпа çыхăнман. 3-мĕш 4-мĕш вариантсенчи *кăмăлĕпе* тата *çакна* сăмахсем тĕп падежра тăман пирки те подлежащи пулма пултараймаççĕ. Тĕп падежра тăрать пулин те 5-мĕш вариантри *мĕн-мĕн* сăмах та подлежащи пулаймасть, мĕншĕн тесен вăл объект пĕлтерĕшлĕ.

**Тестăн пиллĕкмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 6-мĕш ĕç)** пунктуаци тишкерĕвĕпе çыхăннă. Ку ĕçре предложенири хăш-пĕр сăмахсем хыççăн цифрăсем лартса тухнă. Ачасен чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене суйласа илсе хуравра çырмалла.

**Тĕслĕх**. Чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.

*Шкулĕнче те вĕренӳ тикĕс пыман (1) пĕтĕм шкулĕпех (2) пĕр-пĕр колхоза кайса (3) е тырă вырнă (4) е çĕр улми кăларнă (5) е авăн çапнă.*

Предложение тишкеретпĕр те ку çыхăну паллисĕр хутлă предложени пулнине, унăн иккĕмĕш пайĕ пĕрремĕшне ăнлантарнине асăрхатпăр. Апла пулсан, икĕ пай хушшине чарăну палли – икĕ пăнчă – лартмалла, çавăнпа хуравра *1* цифра çыратпăр. Иккĕмĕш пайра пĕр йышши сказуемăйсем (*вырнă, кăларнă, çапнă*) пуррине, вĕсем пĕр-пĕринпе *е* союзпа çыхăннине асăрхатпăр. Пĕр йышши членсем темиçе хут калакан союзпа çыхăнсан вĕсене запятойпа

уйӑрмаллине аса илетпӗр те хуравра *4, 5* цифрӑсем ҫыратпӑр. Хуравра *2, 3* цифрӑсене ҫырмастпӑр, мӗншӗн тесен вӗсем тӑракан вырӑнсене чарӑну палли лартма сӑлтав ҫук.

**Тестӑн улттӑмӗш ыйтӑвӗ (пӗтӗмӗшле 7-мӗш ӗҫ)** синтаксис тишкерӗвӗпе ҫыхӑннӑ: сӑмах майлашӑвӗн тӗп пайне (компонентне) ҫырмалла. Чӑваш чӗлхинче сӑмах майлашӑвӗн тӗп компоненчӗ яланах пӑхӑнаканни хыҫҫӑн тӑрать. Вӑл пӗр сӑмахлӑ та, темиҫе сӑмахлӑ та пулма пултарать. Икӗ пай хушшинчи пулӑшу сӑмахӗсем пӑхӑнакан пай тытӑмне кӗреҫҫӗ.

**Тӗслӗх**. *Чул пек шӑннӑ ҫӗре лумсемпе ватса чав* сӑмах майлашӑвӗн тӗп компонентне ҫырӑр.

*Чул пек шӑннӑ ҫӗре лумсемпе ватса чав* сӑмах майлашӑвӗн тӗп компоненчӗ – *лумсемпе ватса чав.*

**Тестӑн ҫиччӗмӗш ыйтӑвӗ (пӗтӗмӗшле 8-мӗш ӗҫ)** орфографи тишкерӗвӗпе ҫыхӑннӑ. Экзамен тытакан тӗрӗс ҫырма пӗлни ҫителӗксӗр, унӑн орфографи тӗлӗшӗнчен сӑмаха мӗншӗн ҫапла ҫырнине те ӑнлантарма пӗлмелле. 5-мӗш ӗҫе тӗрӗс тӑвас тесен шкул ачисен ҫак правилӑсем ҫине уйрӑмах пысӑк тимлӗх уйӑрмалла:

1) хупӑ сасӑсен хытӑлӑхӗпе ҫемҫелӗхне, вӑрӑмлӑхӗпе кӗскелӗхне, янаравлӑхӗпе янӑравсӑрлӑхне ҫырура палӑртасси;

2) пӗрле, дефиспа е уйрӑм ҫырасси;

3) пайӑр ятсене ҫырасси.

**Тӗслӗх**. Паллӑ тунӑ сӑмахсене мӗнле ҫырнине тӗрӗс ӑнлантарнӑ хурав варианчӗсен номерӗсене ҫырӑр.

1) *куҫҫульпе* – сӑмах вӗҫӗнчи ҫемҫелӗх паллине хупӑ сасӑпа пуҫланакан пур аффикс умӗнче те ҫырмалла;

2) *мӗн-мӗн* – мӑшӑр сӑмахсене дефиспа ҫырмалла;

3) *Мишеркасси* – пайӑр ятсен ҫыхӑнӑвӗнчен пулнӑ ял ячӗсене пӗрле ҫырмалла;

4) *тивӗҫлӗх* – *-лӑх/-лӗх* аффикссенче яланах пӗр *л* ҫырмалла;

5) *сип-сивӗ* – пӗр тан ӑнлава палӑртакан сӑмахсен пӗрлешӗвне дефиспа

| |
|---|
| çырмалла. |

Хуравăн 1-мĕш вариантне тĕрĕс ăнлантарнă: сăмах вĕçĕнчи çемçелĕх паллине хупă сасăпа пуçланакан пур аффикс умĕнче те çырмалла. Хуравăн 2-мĕш вариантне тĕрĕс ăнлантарман: *мĕн-мĕн* сăмах мăшăр сăмах мар, икĕ хут калакан сăмах пулать. 3-мĕш вариантра ял ятне мĕнле çырмаллине тĕрĕс ăнлантарман: *Мишеркасси* ял ячĕ пайăр мар ятсен çыхăнăвĕнчен пулнă. 4-мĕш варианта тĕрĕс ăнлантарнă. 5-мĕш вариантра ăнлантарни тĕрĕс мар: дефиса сăмахăн пĕр пайне икĕ хут каланăшăн лартнă.

Ачасене тест ыйтăвĕсене хуравлама вĕрентме 8, 9-мĕш классем валли хатĕрленĕ вĕренӳ кĕнекисенчи текстсемпе те усă курма пулать. Вăл е ку текста вуланă хыççăн ыйтусемпе ĕçлеттермелле, ыйтăвĕсене вара маларах кăтартнă пек йĕркелемелле.

# УСĂ КУРМА СĔННĔ ЛИТЕРАТУРА


1. Андреев И.А. Чăваш чĕлхи: Чăваш шкулĕн 10–11-мĕш классĕсем валли / И.А. Андреев. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2003. – 175 с.

2. Виноградов Ю.М. Чăваш орфографине шкулта вĕрентесси: Чăваш чĕлхи вĕрентекенсем валли / Ю.М. Виноградов. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2007. – С. 83–106.

3. Виноградов Ю.М. Хăнăхтару пуххи: 8–9 классем валли / Ю.М. Виноградов. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательстви, 2008. – 163 с.

4. Горшков А.Е. Сăмах пултăр уçăмлă, шухăш пултăр витĕмлĕ / А.Е. Горшков. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1981. – 127 с.

5. Егорова А.С. Единый республиканский экзамен по чувашскому языку: опыт, проблемы, перспективы / А.С. Егорова // Актуальные вопросы исследования и преподавания родных языков и литератур: материалы Междунар. Науч.-практ.конф. (Чебоксары, 16 нояб. 2019 г.) / редкол.: Ж.В. Мурзина и др. – Чебоксары: ИД «Среда», 2019. – С. 204-206.

6. Егорова А.С. Республикăн пĕрлехи экзаменĕ – вĕрентекенсен професси ăсталăхне тата вĕренекенсен мотивацине ӳстермелли мелсенчен пĕри. / Халăх шкулĕ . – 2020. – № 6. – С. 7-8.

7. Егорова А.С. Чăваш чĕлхи. Республикăн пĕрлехи экзаменĕ / А.С. Егорова. – Шупашкар, 2020. – 138 с.

8. Орфографипе пунктуаци: тĕрĕс çырмалли правилăсем // Ю.М. Виноградов, Г.М. Виноградова Орфографи словарĕ. Тĕрĕс çырмалли правилăсем. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн редакципе изд-во пайĕ, 2002. – С. 256–289.

9. Чăваш чĕлхипе экзамена хатĕрленесси: 9-мĕш класс / Ю.М. Виноградов пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2010. – 111 с.

10. Чăваш чĕлхи. Энциклопеди словарĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2004. – 223 с.

11. Шкул ачисен пĕлĕвĕпе хăнăхăвĕсене хакласси: Чăваш шкулĕн 5–11 класĕсенче чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенсем валли / Чăваш Республикин Вĕренӳ министерстви; Ю.М. Виноградов, Л.Г. Петрова, Е.А. Майков хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш Республикин Вĕренӳ институчĕн редакципе издательство пайĕ, 2004. – 30 с.

## ИНТЕРНЕТ РЕСУРСЕМ

1. Демонстрационный вариант контрольных измерительных материалов для проведения в 2021 году единого республиканского экзамена по чувашскому языку (ГИА – 9)// [Электронный ресурс] / Режим доступа: gia_-9_2021_chyail_demo_rotated.pdf (cap.ru)

2. Кодификатор элементов содержания и требований к уровню подготовки обучающихся для проведения в 2019 году единого республиканского экзамена по чувашскому языку (ГИА –9) // [Электронный ресурс] / Режим доступа: gov.cap.ru/Content2020/orgs/GovId_897/gia_-_9_2021_chyail_kodifikator_rotated.pdf

3. Республикăн пĕрлĕхлĕ экзаменне хатĕрленесси (тĕрĕс çырăва, пуплеве хăнăхасси) / [Электронный ресурс] / Режим доступа: https://portal.shkul.su/a/theme/259.html

4. Спецификация контрольных измерительных материалов для проведения в 2021 году единого республиканского экзамена по чувашскому языку (ГИА – 9) // [Электронный ресурс] / Режим доступа: gia_-9_2020_chyail_specifikaciya_rotated_removed.pdf (cap.ru)

5. 2021 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента изложени çырма хатĕрлесси // [Электронный ресурс] / Режим доступа: http://chrio.cap.ru/sitemap.aspx?id=2901253

6. 2021 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента сочинени çырма хатĕрлесси // [Электронный ресурс] / Режим доступа: http://chrio.cap.ru/sitemap.aspx?id=2901253

7. 2021 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента тест ыйтăвĕсене хуравлама хатĕрлесси // [Электронный ресурс] / Режим доступа: http://chrio.cap.ru/sitemap.aspx?id=2901253

8. Чăваш чĕлхипе 2021 çулта çырмалли тĕрĕслев ĕçĕн тĕслĕх вариантĕ // [Электронный ресурс] / Режим доступа: demo_(kontrolj._rabota_po_chuv.yaz.).pdf (cap.ru)

9. 2021 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе тĕрĕслев ĕçĕ çырма хатĕрлесси (презентаци) // [Электронный ресурс] / Режим доступа: http://chrio.cap.ru/Content2021/orgs/GovId_121/prov.rabota.pdf

**Хушса пани**

## Чăваш чĕлхипе çырнă тĕрĕслев ĕçĕсене хакласси

Туллин хуравламалли 1-мĕш ĕçе тусан шкул ачи 0-5 балл илме пултарать. Текстăн тĕп шухăшне тулли те уçăмлă уçса парсан чи нумай 5 балл илме пулать, анчах орфографи, пунктуаци, грамматика тата пуплев йăнăшĕсем тĕл пулаççĕ пулсан 1 балл чакармалла.

Кĕскен хуравламалли 2-8-мĕш ĕçсене тĕрĕс тусан кашни ĕçшĕн 1-ер балл илет.

Хурав тĕрĕс пулмасан е вăл пачах пулмасан – 0 балл лартаççĕ.
1-8-мĕш ĕçсене тĕрĕс тусан пĕтĕмпе 12 балл пухма май пур.

**Балсене палла (оценкăна) куçармалли виçе**

| **Баллсем** | **Паллă** |
|---|---|
| 0-5 | «2» |
| 6-7 | «3» |
| 8-9 | «4» |
| 10-12 | «5» |

**Тĕрĕслев ĕçĕн тĕслĕх варианчĕн хуравĕсем**

| **Ĕç номерĕ** | **Тĕрĕс хурав** |
|---|---|
| 2 | 15<е>51 |
| 3 | 5 |
| 4 | салху |
| 5 | 1 |
| 6 | 145<е>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 7 | лумсемпе ватса чав |
| 8 | 14<е>41 |